28-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ИЮНЬ 12 ЫТЛАРИКУН № ...

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаҫачĕ

Иккĕмĕш кварталта укҫа-тенкĕ пухмалли плана республика юбилейĕ тĕлне тултарар!

Тăван ҫĕршывăн халăх хуҫалăхне малалла аталантарса пыма, нимĕҫ захватчикĕсем аркатнă хуласемпе ялсене юсаса ура ҫине тăратма тата халăх пурнăҫне лайăхлатма, культурăпа сутĕҫ ĕҫĕсене туса пыма государствăна укҫа-тенкĕ нумай кирлĕ. Пирĕн государствăна кирлĕ укҫана халăх хуҫалăхĕ—промышленноҫпа транспорт, ҫĕрĕҫĕпе суту-илӳ—ытларах парса тăрассĕ. Унсăр пусне государство бюджетне халăх обязательнăй йĕркепе тӳлекен тата хăй ирĕкĕпе хывакан укҫа-тенкĕ те кĕрет.

Пирĕн ĕҫҫыннисем Тăван ҫĕршывпа фронта Отечественнăй Аслă вăрçă ҫулĕсенче уйрăмах вăйлăн пулăшрĕҫ. Фабрикăсемпе заводсенче, колхоз уйхирĕсенче ырми-канми ĕҫлесе, фронта мĕн кирлине пĕтĕмпех туса кăларнисĕр пусне, ĕҫҫыннисем хăйсен перекетленĕ укҫи-тенкине нумай парса пулăшрĕҫ.

Йывăр вăрçă вăхăтĕнче государствăна укҫа-тенкĕ парса пулăшас ĕҫе орденлă Чăваш республикинчи ĕҫҫыннисем те активлăн хутшăнчĕҫ. Вĕсем вăрçă ҫулĕсенче оборона тата Хĕрлĕ Çар фончĕсене 100 миллион тенкĕ ытла укҫан, 24 миллион тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнă. Унсăр пусне вăрçă вăхăтĕнче кăларнă заемсене пурĕ 501 миллион тенкĕлĕх, укҫапа ялала лотерейисен билечĕсене 102 миллион тенкĕлĕх илнĕ.

Кăҫалхи ҫĕнĕ заема вырнаҫтарас ĕҫ Отечественнăй вăрçă чарăннă, мирлĕ аталану тапхăрĕ пуҫланнă вăхăтра иртрĕ. Савăнпа пирĕн ĕҫҫыннисем кăҫалхи заема, ҫĕнтерӳ заемне хавасланса ҫырăнса, перекетлесе хăварнă хăйсен укҫине государствăна пачĕҫ.

Заема вырнаҫтарнипе пĕр вăхăтрах ялсенче унăн укҫине пухасси сарăлса кайрĕ. Малта пыракан районсем колхозниксемпе колхозсен хушшинче сарнă заем укҫине пĕтĕмпех пухса ҫитерессĕ ĕнтĕ. Чурачăк районĕ колхозниксемпе единоличниксем хушшинче сарнă заем укҫине республикăра пуринчен малтан пухса пачĕ. Çавăнпа район Чăваш АССР Совнаркомĕн премине илме тивĕҫлĕ пулчĕ. Муркаш районĕ те ялта сарнă заем укҫипе пухса ҫитернĕпе пĕрех. Кунта 3.155.000 тенкĕ пухнă, пухмалли тепĕр 5 пин тенкĕ ҫеҫ юлнă. Красноармейски, Вăрмар, Куславкка, Вăрнар тата Тăвай районĕсем те заем укҫи пухас тĕлĕшпе лайăх ĕҫлеҫҫĕ.

Заем укҫи пухасси халĕ—финанс работникĕсен тĕп ĕҫĕ. Заем укҫине пухнинчен II-мĕш кварталти финанс планне тултарассин ăнăҫлăхĕ килет. Малта пыракан районсенчи финанс работникĕсем ҫакна асра тытса ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсем финанс работникĕсен республикăри канашлăвĕнче илнĕ обязательствăна ҫыслăн пурнăҫа кĕртессишĕн кĕрешеҫҫĕ.

Анчах та чăваш халăх уявĕ умĕнхи ăмăртура пур районсенчи финанс работникĕсем те ҫавăн пек ĕҫлемеҫҫĕ-ха. Чылай районсенче заем укҫи пухас ĕҫе сӳрĕклетсе ячĕҫ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Первомайски район юлса пырать. Первомайски районри ялсенче заем укҫине пĕтĕмпе те 167 пин тенкĕ кăна пухнă. Июнĕн 5-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче кунта пурĕ те 18 пин тенкĕ ҫеҫ пухнă. Кун пек хăвăртлăхпа ĕҫлесен, Первомайски района заем укҫи пухса пĕтерме ҫулталăк ытла кирлĕ!

Çавăн пекех, заем укҫи пухас тĕлĕшпе Йĕпреҫ, Шăмăршă, Улатăр, Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Комсомольски, Пăрачкав, Советски, Çĕмĕрле, Канаш, Сĕнтĕрвăрри тата Етĕрне районĕсем юлса пыраҫҫĕ. Вĕсем заем укҫине 10 процентран пуҫласа 40 процент таран ҫеҫ пухнă. Апла пулин те ку районсенче ĕҫе хăвăртлатас тесе нимĕн те тумаҫҫĕ. Иртнĕ пилĕк кун хушшинче вĕсем те пĕрер процент чухлĕ кăна ӳсĕм тунă. Пилĕк кун хушшинче Хĕрлĕ Чутай районĕнче 13 пин тенкĕ пухнă, Пăрачкав районĕнче пĕр пус та пухман.

Çак районсем начар ĕҫленĕ пирки ĕнтĕ заем укҫи пухас ĕҫ республикипе те ҫителĕксĕр пырать. Июнĕн 5-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче республикăри ялсемпе колхозсенче заем укҫине 1.835 пин тенкĕ ҫеҫ пухнă. Йĕркеллĕ ĕҫленĕ пулсан, ҫавăнтан 4 хут ытларах пухмалла пулнă. Июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне илсен, республикăра колхозниксемпе колхозсем хушшинче сарнă заем укҫине 49 миллион ытларах пухнă.

Юлса пыракан районсенчи партипе совет организацийĕсем тата финанс работникĕсем, заем ĕҫĕ ăна сарнипех вĕҫленнĕ, тесе ăнланаҫҫĕ пулмалла. Вĕсем заем укҫи хăй тĕллĕнех пухăнасса шанса лараҫҫĕ, ҫак ĕҫе тивĕҫлипе йĕркелесе ертсе пымаҫҫĕ.

Çакна асра тытмалла: заем укҫин 25 проценчĕ вырăнти бюджета юлать. Вырăнти бюджета юлнă укҫа халăх нушисене тивĕҫтерме—рабочисемпе служащисене ĕҫукҫи тӳлеме тата ытти ĕҫсем тума каять. Анчах та ҫакна пĕлсе тăраҫҫĕ пулин те, чылай районсенчи финанс работникĕсем заем укҫине пухма тăрăшмаҫҫĕ. Укҫа-тенкĕ начар пухнă пирки юлса пыракан районсенче ялти интеллигенцие ĕҫукҫи вăхăтра тӳлеймеҫҫĕ. Сутĕҫпе медицина работникĕсене Йĕпреҫ районĕнче — 180 пин тенкĕ, Первомайски районра — 158 пин тенкĕ, Шăмăршă районĕнче — 149 пин тенкĕ, Улатăр районĕнче—131 пин тенкĕ ĕҫукҫи тӳлемелле. Сĕнтĕрвăррипе Елчĕк районĕсенче те ҫавăн пек парăмсем пысăк.

Çак районсенчи руководительсем парăмран тухма республика бюджетĕнчен кивҫен укҫа парасса кĕтсе лараҫҫĕ пулмалла. Кун пек шутлани пĕртте тĕрĕс мар. Бюджетăн тупăш пайне тултармасăр, халăхран укҫа-тенкĕ пухмалли плана тултармасăр кивҫен укҫа илме май пулмĕ. Çавăнпа та заем укҫи пухас ĕҫе вăраха тăсма юрамасть, ҫийĕнчех туса пырас пулать.

Финанс работникĕсен задачи халĕ заем укҫи пухасси кăна мар, иккĕмĕш кварталти финанс планне ăнăҫлăн тултарасси те пулать. Финанс работникĕсен республикăри канашлăвĕнче иккĕмĕш кварталти финанс планне республика юбилейĕ тĕлне тултарма, мĕнпур парăмсене пухса ҫитерме пулнăччĕ. Пур ĕҫе те вăхăтра туса пыма пултаракан Чурачăкпа Муркаш районĕсем квартал планне срокчен тултарчĕҫ. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлнех Чурачăк районĕ —127 процент, Муркаш районĕ—119 процент тултарнă. Халĕ ку районсенче укҫа-тенкĕ пухмалли плана кашни ял Совечĕ, кашни тӳлев тăрăх тултарассишĕн кĕрешеҫҫĕ. Укҫа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Красноармейски, Вăрмар, Тăвай, Шăхасан, Шупашкар тата Куславкка районĕсем те начар мар ĕҫлеҫҫĕ.

Республикăра налогсемпе ытти парăмсене пухас ĕҫ ҫителĕксĕр пырать-ха. Иккĕмĕш кварталта укҫа-тенкĕ пухмалли плана ҫак уйăх пуҫланнă тĕле 68 процент ҫеҫ тултарнă.

Çакă вăл, паллах, чылай районсем укҫа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе сахал ĕҫленинчен, ăна хакламаннинчен килет. Сăмах каллех Шăмăршă, Первомайски, Хĕрлĕ Чутай, Йĕпреҫ, Комсомольски, Кувакино, Улатăр, Çĕмĕрле районĕсене тивет. Вĕсем заем укҫине кăна мар, налогсен, государство тупăшĕсен, страховани укҫине тата ытти тӳлевсене те пухмаҫҫĕ. Ку районсенче иртнĕ ҫулхи парăмсем те сахал мар. Çĕмĕрле, Советски, Етĕрне районĕсем те укҫа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе юлса пыма пуҫларĕҫ. Вĕсем иккĕмĕш квартал планне ҫуррийĕнчен ытла тултарман. Вăл районсен ҫавăн пек юлса пыма нимĕнле сăлтав та ҫук вара.

Чăваш халăхĕн аслă уявĕ—республика 25 ҫул тултарни ҫывхарса ҫитет. Республикăри ĕҫҫыннисен уяв умĕнхи ĕҫ ҫĕкленĕвĕ питех те пысăк. Рабочисем уявччен производство планĕсене иртерсе тултарассишĕн, колхозниксем — вăйлă тырпул пăхса ҫитĕнтерессишĕн кĕрешеҫҫĕ. Республика юбилейĕ ячĕпе пыракан ăмăртура финанс работникĕсен те тимлĕн ĕҫлемелле. Вĕсен чăваш халăх уявне иккĕмĕш кварталта укҫа-тенкĕ пухмалли плана пĕтĕмпех тултарнипе кĕтсе илмелле.

„ПИОНЕРСКАЯ ПРАВДА" ХАҪАТА

«Пионерская Правда» хаҫат 20 ҫул тултарнă кун унăн редакцине, ҫамрăк корреспонденчĕсене тата ҫав хаҫата вулакансене чĕререн саламлатăп.

«Пионерская Правда» совет ачисене наука пĕлĕвĕсене ăнланса илме пулăшать, пионерсемпе шкул ачисене пирĕн аслă учитель Ленин вĕрентсе хăварнă пек пăхса ӳстерет.

«Пионерская Правда» хаҫата ҫамрăк ленинецсене хамăр Тăван ҫĕршыва чунтан юратмалла туса пăхса ӳстерес ĕҫре ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем тума ырă сунатăп.

И. СТАЛИН.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

«ПИОНЕРСКАЯ ПРАВДА» ХАҪАТА ĔҪЛĔХ ХĔРЛĔ ЯЛАВ ОРДЕНĔПЕ НАГРАДĂЛАССИ ҪИНЧЕН

Ачасене пăхса ӳстерес тата вĕрентес тĕлĕшпе нумай ҫул хушши ăнăҫлăн ĕҫленĕшĕн, пионерсемпе шкул ачисене хăйсен вăйĕ таран Тăван ҫĕршыва тăшмантан сыхлама ăнăҫлă организацилленĕшĕн «Пионерская Правда» хаҫата Ĕҫлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль.
1945 ҫулхи июнĕн 9-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

«БУДАПЕШТА ИЛНĔШĔН», «КЕНИГСБЕРГА ИЛНĔШĔН», «ВЕНĂНА ИЛНĔШĔН» ТАТА «БЕРЛИНА ИЛНĔШĔН» ЯТЛĂ МЕДАЛЬСЕМ ТĂВАССИ ҪИНЧЕН

1. СССР Оборона Халăх Комиссариачĕ ыйтнине пурнăҫа кĕртес,—«Будапешта илнĕшĕн», «Кенигсберга илнĕшĕн», «Венăна илнĕшĕн» тата «Берлина илнĕшĕн» ятлă медальсем тăвас.

2. «Будапешта илнĕшĕн», «Кенигсберга илнĕшĕн», «Венăна илнĕшĕн» тата «Берлина илнĕшĕн» медальсемпе Будапешта, Кенигсберга, Венăна тата Берлина геройла штурмласа туртса илнĕ чух ҫапăҫнă пур ҫынсене те, ҫавăн пекех тата ҫав хуласене туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусен организаторĕсемпе руководителĕсене наградăлас.

3. «Будапешта илнĕшĕн», «Кенигсберга илнĕшĕн», «Венăна илнĕшĕн» тата «Берлина илнĕшĕн» медальсем ҫинчен калакан положение ҫирĕплетес.

4. «Будапешта илнĕшĕн», «Кенигсберга илнĕшĕн», «Венăна илнĕшĕн» тата «Берлина илнĕшĕн» медальсен тĕслĕхĕсене тата вĕсем мĕнле пулмалли ҫинчен ҫырнине ҫирĕплетес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль.
1945 ҫулхи июнĕн 9-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

«БЕЛГРАДА ИРĔКЕ КĂЛАРНĂШĂН», «ВАРШАВĂНА ИРĔКЕ КĂЛАРНĂШĂН» ТАТА «ПРАГĂНА ИРĔКЕ КĂЛАРНĂШĂН» ЯТЛĂ МЕДАЛЬСЕМ ТĂВАССИ ҪИНЧЕН

1. Оборона Халăх Комиссариачĕ ыйтнине пурнăҫа кĕртес,—«Белграда ирĕке кăларнăшăн», «Варшавăна ирĕке кăларнăшăн» тата «Прагăна ирĕке кăларнăшăн» ятлă медальсем тăвас.

2. «Белграда ирĕке кăларнăшăн», «Варшавăна ирĕке кăларнăшăн» тата «Прагăна ирĕке кăларнăшăн» медальсемпе Белграда, Варшавăна тата Прагăна геройла штурмласа ирĕке кăларнă чух ҫапăҫнă пур ҫынсене те, ҫавăн пекех тата ҫав хуласене ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусен организаторĕсемпе руководителĕсене наградăлас.

3. «Белграда ирĕке кăларнăшăн», «Варшавăна ирĕке кăларнăшăн» тата «Прагăна ирĕке кăларнăшăн» медальсем ҫинчен калакан положение ҫирĕплетес.

4. «Белграда ирĕке кăларнăшăн», «Варшавăна ирĕке кăларнăшăн» тата «Прагăна ирĕке кăларнăшăн» медальсен тĕслĕхĕсене тата вĕсем мĕнле пулмалли ҫинчен ҫырнине ҫирĕплетес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль.
1945 ҫулхи июнĕн 9-мĕшĕ.

ХĂМА ҪУРАКАН МАШИНА ĔҪЛЕМЕ ТЫТĂННĂ

ВĂРНАР. Мăнъял Хапăсри «Гигант» колхоз членĕсем двигательпе ĕҫлекен арман тата хăма ҫурмалли машинăна юсаса ĕҫе яма йышăнчĕҫ. Халĕ колхозра хăма ҫуракан машина ĕҫлет. Çавăн пекех колхозра кирпĕч ҫапакан мастерской та ĕҫлеме тытăннă.

Г. К. Жуков Маршал тата А. Я. Вышинский тунă пресс-конференци

БЕРЛИН, июнĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта Совет Союзĕн Германири оккупациллĕ ҫарĕсен главнокомандующийĕ Г. К. Жуков тата Ют ҫĕршыв Ĕҫĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский Совет Союзĕпе ют ҫĕршывсен корреспонденчĕсен пресс-конференцине иртерчĕ. Жуков Маршал Англи, Америка, Канада тата Франци корреспонденчĕсен пĕр ушкăнĕ ҫырса панă ыйтусем ҫине ответленĕ.

— Союзниксен Контроль Комиссийĕн задачисенчен хăшне чи кирли тесе шутлани ҫинчен тата виҫĕ держава Германи пирки тытакан пĕтĕмĕшле политикăн пуласлăхĕ ҫине эпĕ мĕнле пăхни ҫинчен ыйтаҫҫĕ,—тенĕ Г. К. Жуков.— Ку ыйту пирĕн хаҫатсем пĕлтернинчен пĕтĕмпех паллă. Ку ыйтупа манăн нимĕнле уйрăм шухăш та ҫук.

— Мана панă иккĕмĕш ыйту ҫакăн пек,—тенĕ малалла Маршал:

Берлиншăн пынă татăклă ҫапăҫури ку таранччен пĕлтермен хăшпĕр ĕҫсем ҫинчен эсир пĕлтерме пултармăр-и?

— Берлиншăн пынă ҫапăҫу—татăклă ҫапăҫу пулнă. Вăл ҫапăҫăва иртерме эпир тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр. Татса паракан ҫав ҫапăҫу валли эпир ҫителĕклĕ таран хатĕрсем пухрăмăр, операци ăнăҫлă пулмалла турăмăр. Çав ҫапăҫу валли техника: авиаци, танксем, артиллери нумай хатĕрлесе, тăшман хирĕҫ тăнине кĕске вăхăтрах ҫĕмĕрсе, Берлина хăвăрт тытса илмелле турăмăр. Çак операцие пурĕнчен те тĕплĕн хатĕрлесе турăмăр. Тĕрлĕ ҫарсем пĕрле ҫыхăнса кĕрешесси ҫине уйрăмах тимлĕн ҫавăрăнса пăхрăмăр. Эпир пырса ҫапассине нимĕҫсем кĕтсе тăнă. Çавăнпа та, эпир Берлин еннелле пырса ҫапассине нимĕҫсем кĕтсе тăнине пĕлсе, эпир тăшмана пĕлтермесĕр пырса ҫапасси ҫинчен нумай шухăшларăмăр. Вăйсемпе нимĕҫсене кĕтмен ҫĕртен пырса ҫапас шутпа эпĕ, командующи пулса, ҫĕрле пĕтĕм фронтпа кĕтмен ҫĕртен атака тума шутларăм. Чи малтанах эпир ҫĕрле артиллерирен вăйлă персе хатĕрлентĕмĕр. Тыткăна лекнисем каласа панă тăрăх, нимĕҫсем ҫакна кĕтмен. Эпир ҫĕрле тапăнма пултарасси ҫинчен вĕсем шутланă пулĕ те, анчах вăл тĕп атака пуласси ҫинчен шухăшлама пултарайман. Артиллерирен персе хатĕрленнĕ хыҫҫăн ҫĕрле эпир танксен атакине пуҫласа ятăмăр. Çак атакăра пирĕн 4.000 танк ытла пулчĕ. танксене 22.000 артиллерипе миномет кĕпҫи пулăшса пычĕҫ. Сывлăшран 4.000 е 5.000 самолет пулăшса пычĕҫ, вĕсем те ҫĕрлех ҫапăҫма пуҫларĕҫ. Çапăҫу хирне авиаци хумăн-хумăн вĕҫсе пычĕ. Çĕрле 1.000 бомбардировщик ҫапăҫрĕ, ытти самолетсем ирхине тата кăнтăрла вĕҫсе пычĕҫ. Пĕр талăк хушшинче 15.000 вĕҫев ытла тунă. Танксене ҫĕрле ҫӳреме пулăшас шутпа эпир ку таранччен ниҫта та туман япалана туса иртертĕмĕр—прожекторсемпе ҫутатрăмăр.

Ку ĕҫ апрелĕн 21-мĕшĕнче ирхине 4 сехет тĕлнелле пулчĕ. Çак ҫĕнĕ япалапа усă курса, эпир хамăр танксемпе пехотинецсене пулăшнисĕр пусне тата тăшмана пирĕн еннелле тĕллесе перейми турăмăр.

«Прожектор миҫе пулчĕ?»

— Икҫĕр ытла.

«Мĕнле вырăнта?»

— Татăклăн пырса ҫапмалли вырăнта кашни 200 метртан. Çакна та шута илес пулать: тăшмана тĕрлĕ енчен вăйлăн пырса ҫапнă. Эпир кĕтнĕ пекех, пирĕн атака тăшманшăн кĕтмен ҫĕртен пулчĕ тата питĕ вăйлă пулчĕ. Çакăн пек вăйлăн пырса ҫапассине кĕтмен пирки нимĕҫсем хирĕҫ тăнине пирĕн ҫарсем хăвăрт пусарчĕҫ. Хăйĕн оборони тӳсейменнине кура, тăшман хăйĕн Берлин районĕнчи мĕнпур резервĕсене илсе пычĕ. Берлинри гарнизонăн пĕр пайне те илсе пычĕ. Берлина хӳтĕлемелли резервсемпе усă курса, вăл пире чарса лартасшăн пулчĕ. Çакăнта тăшман пит пысăк йăнăш турĕ. Тăшманăн ҫавăнта пыракан резервĕсене пирĕн самолетсем тата танксем пĕтерсе тăкрĕҫ. Совет ҫарĕсем Берлин патне татса кĕнĕ вăхăтра хула оборони чылай вырăнта ҫаралса юлнă. Сăмахран, тăшманăн зенитнăй оборони ҫаралса юлнă, ҫакна пула пирĕн авиаци аялтанах вĕҫме пултарчĕ. Берлин районĕнчи ҫарĕсене кăларса кайнă пирки тăшман хăйĕн малтанах хатĕрлесе хунă оборонине хавшатнă, ҫавна пула вăл эпир пырса ҫапнине тӳсме пултараймарĕ. Нимĕҫсен Берлин патĕнче пулса иртнĕ операцие ҫур миллион ҫын ытла хутшăннă. Вĕсенчен 300.000 ҫынна ытла эпир тыткăна илнĕ, 150.000 ҫынтан кая мар вĕлернĕ, ыттисем тарса пĕтнĕ. Берлин операцийĕ хăвăртлăхсем тĕлĕшпе те, ăс парас тĕлĕшпе те ҫителĕклĕ таран ăнăҫлă иртрĕ тесе шутлатпăр эпир (кулаҫҫĕ, ларакансем хушшинче хусканни палăрать). Çав ҫапăҫура пирĕн ҫарсем хăйсем валли нумай выводсем турĕҫ. ҫĕрлехи ҫапăҫу тĕлĕшпе пысăк опыт туянчĕҫ.

Виҫҫĕмĕш ыйту: «Берлина пĕрле контроллесси ҫине эсир епле пăхатăр?»

— Пысăк Берлина тытса тăрас тĕлĕшпе союзниксен комендатурине туса хума шутлаҫҫĕ.

«Хĕрлĕ Çарпа нимĕҫ халăхĕ хушшинче епле ҫыхăну пулма пултарать? Нимĕҫ халăхĕ союзниксемпе ҫыхăнса ĕҫлес ыйту ҫине Эсир мĕнле пăхатăр?»

— Чи малтан юлашки ыйту ҫине ответ паратăп. Эпир Германи халăхĕпе ҫыхăнса тăрасси тата Германи халăхĕ союзлă халăхсемпе ҫыхăнса тăрасси нимĕҫсем хăйсене епле тыткаласшинчен килет, тесе шутлатăп эпĕ. Германи парăннинчен тĕрĕс выводсем мĕн чухлĕ хăвăртрах тăвĕҫ, ҫавăн чухлĕ вĕсемшĕн лайăхрах пулĕ. Хĕрлĕ Çар нимĕҫ халăхĕпе мĕнле ҫыхăнса тăрасси оккупациллĕ ҫирĕп режимран тухса тăрать.

— Эпир ҫак ыйтăва лартнă чухне,—тенĕ акăлчансен «Санди Таймс» хаҫачĕн корреспонденчĕ А. Верт,—Хĕрлĕ Çар вырăнти халăхпа тăванлашма (братани тума) пултарни ҫинчен пĕлесшĕнччĕ.

— Оккупациллĕ ҫирĕп режим тени ахалех паллă пулмалла,—ответленĕ Жуков Маршал.

Ыйту: «Эсир ҫар преступникĕсене суд умне тăратма хатĕрленетĕр-и?»

— Паллах, хатĕрленетпĕр.

«Хăҫан?»

— Эпир решенисене вăраха хăварасшăн мар. Пĕтĕмпех урăхла, эпир ҫак ыйтăва хăвăрт татса парассишĕн тăратпăр.

«Хĕрлĕ Çара демобилизацилесси ҫинчен эсир мĕн те пулин калама пултарăр-ши?»

— Европăри вăрçă пĕтрĕ. Ку ыйту халĕ пирĕн умра тăрать. эпир ăна пăхса тухатпăр.

«Ирĕклĕ Германи» комитет. Контроль Совечĕн ĕҫĕнче мĕнле те пулин пулăшма пултарать-и?»

— Ку ыйтăва эпĕ ҫивĕччĕн тăракан ыйту тесе шутламастăп. Мана ҫырса панă ыйтусенчен юлашки ыйту ҫакăн пек,—тенĕ Маршал: «Германие экономика тĕлĕшпе хĕҫпăшалсăрлантарас тесе мĕн тумалла пулать-ши?» Эпĕ Крымри конференцин решенийĕсемпе тата Германи парăнни ҫинчен калакан Декларацие пĕтĕмĕшпех килĕшетĕп. Ку ыйтупа вĕсенче мĕн кирлине пĕтĕмпех каланă. Кирек епле пулсан та, Германи агрессиллĕ ҫар держави пулса урăх нихăҫан та ҫĕкленмелле мар тăвас пулать.

Корреспондентсем хатĕрлесе малтанах панă ыйтусем ҫине ответленĕ хыҫҫăн нумай урăх ыйтусем пама пуҫланă.

«Сирĕн шутпа, Берлинра ют ҫĕршывсен яланхи корреспонденчĕсем пулма пултарассĕ-и?»

— Паллах, хаҫат-журналсем, вăл шутра ют ҫĕршыв хаҫат-журналĕсем те, пĕтĕмĕшле ĕҫре усă пама пултараҫҫĕ.

«Ют ҫĕршыв корреспонденчĕсене яланлăха кунта куҫарас тĕлĕшпе мĕн те пулин тăватăр-и?»

— Малашнехи ĕҫсем ҫинчен калакан декларации ҫине эпир тин ҫеҫ алă пуҫрăмăр. Ку ыйтăва халĕ эпир те пирĕн союзниксем те хускатман.

Лондонри «Дейли телеграф» хаҫачĕн корреспонденчĕ Дж. Фишер Жуков Маршалран ҫакăн ҫинчен ыйтнă: «Çар преступникĕсене суд тунă ҫĕре хаҫат-журналсен представителĕсене кĕртме шутлаҫҫĕ-и?»

—Ун ҫинчен калама йывăр-ха, анчах та, ман шутпа,—ответленĕ Маршал,—эпир те, союзниксем те суд ларăвĕсене уҫҫăн иртерни усăллă пулнă пулĕччĕ.

— Совет тата ют ҫĕршыв хаҫат-журналĕсемшĕн Харьковра уҫă иртнĕ суд пек,—тенĕ. А. Я. Вышинский.

А. Верт корреспондент Маршала ҫапла ыйту панă:

«Гитлера мĕн пулнине эсир пĕлетĕр-и?»

— Ку ыйту пĕртте уҫă мар. Нимĕҫ главнокомандующийĕн адъютанчĕсен дневникĕсенчен ҫакă паллă: Берлин парăнассиччен икĕ кун маларах Гитлер Ева Браун киноактрисăна качча илнĕ. Гитлер вилнине эпир тупаймарăмăр. Гитлер кунҫулĕ пирки эпĕ татса калама пултараймастăп. Юлашки вăхăтра вăл Берлинран вĕҫсе тухса кайма пултарнă, вĕҫсе хăпармалли ҫулсем ҫапла тума май панă.

Корреспондентсем ыйтнипе Г. К. Жуков кĕскен хăйĕн биографине каласа панă. Биографине каласа панă вăхăтра ăна тата урăх ыйтусем панă:

«Инҫетри Хĕвелтухăҫĕнче ҫапăҫни ҫинчен каласа парăр-ха?»

— Инҫетри Хĕвелтухăҫĕнче эпĕ пулман, Монголире—Халхин-Гол патĕнче пулнă. Унти ҫапăҫу—вырăнти операци кăна пулнă, ҫавăнпа та интереслă пулма пултараймасть. Операци енчен пăхсан кăна вăл интереслă, мĕншĕн тесен унта пит нумай танк тата авиаци хутшăннă. Çапăҫу мĕн пурĕ те вунă кун кăна пынă. Çав вăхăтра японецсен 6-мĕш армине хупăрласа илсе аркатса тăкнă.

«Эсир кама вăйлăрах тăшман тесе шутлатăр: нимĕҫсене-и, японецсене-и?»

— Нимĕҫ текен тăшман ҫук халĕ,—тенĕ Маршал,—иртни ҫинчен калас пулсан, ҫапла каламалла: техника енчен илсен, вăл вăхăтра нимĕҫсем японецсенчен вăйлăрах пулнă. Хальхи вăхăтра Япони салтакĕ мĕнле иккенне пĕлместĕп, мĕншĕн тесен вăл вăхăтранпа условисем улшăннă.

«Дейли Уоркер» корреспонденчĕ Д. Гиббонс Жуков Маршалтан ҫапла ыйтнă.

«Берлина хӳтĕленипе Мускава хӳтĕленине мĕнле танлаштарса пăхма пултаратăр Эсир?»

— Кунта танлаштару пулма пултараймасть. Нимĕҫсене эпир Одер ҫинче аркатса тăкрăмăр, Берлинра вĕсен кунĕ пĕтрĕ. Совет Союзĕн столицине хӳтĕлеме мораль тĕлĕшпе тата техника тĕлĕшпе вăйлă ҫарсем тухрĕҫ. Çавна пула эпир Мускава хӳтĕлеме кăна мар, нимĕҫсене хирĕҫ татăклăн пырса ҫапма та пултартăмăр. Çапла тăвасси ĕнтĕ пирĕн планра пулнă. Хăйсем пĕтнĕ вăхăтра Берлин районĕнче те ытти участоксенче те нимĕҫсем ҫавăн пек тума пултарайман.

«Эсир ертсе пынă операцисене Маршал Сталин куллен хутшăнса пынă-и?»—тесе ыйтнă «Таймс» корреспонденчĕ Р. Паркер.

«Сталин Маршал,—ответленĕ Г. К. Жуков,—Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтăн пур участокĕсене те вăл шутра эпĕ пулнă участока та, куллен ертсе пынă».

Юлашкинчен, Г. К. Жуков Маршал корреспондентсене пысăк карта тăрăх кăтартса, Берлинри операцин схемипе паллаштарнă.

Е. КАПЛАНСКИЙ.
А. ПОЛТОРАЦКИЙ.

СССР Наука Академийĕн работникĕсене Социализмлă Ĕҫ Геройĕ ятне пани тата наградăлани

Наукăпа техникăна аталантарас тĕлĕшпе ҫав тери паха ĕҫсем тунăшăн, СССР Наука Академийĕ 220 ҫул тултарнă май, СССР Верховный Совет Президиумĕ вунвиҫĕ академика — А. А. Байкова, И. П. Бардина, А. Н. Баха, И. М. Виноградова, Н. Д. Зелинские, Т. Д. Лысенкăна, И. И. Мещанинова, Н. И. Мусхелишвилие, В. А. Обручева, Л. А. Орбелие, М. А. Павлова, Д. Н. Прянишникова, А. Е. Фаворские — Социализмлă Ĕҫ Геройĕ ятне панă тата ҫакăн чухлĕ ҫынна наградăланă:

Ленин орденĕпе — 96 ученăя;
1-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕпе — 14 ученăя;
Ĕҫлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — 373 ученăя;
2-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕпе — 8 ученăя;
Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе — 151 ученăя;
«Хисеп палли» орденпа—424 ученăя;
«Ĕҫри хастарлăхшăн» медальпе — 277 ученăя;
«Ĕҫре палăрнăшăн» медальпе — 123 ученăя.

РАЙОН ЦЕНТРНЕ ЙĔРКЕЛЕССĔ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Чăваш республики 25 ҫул тултарнă тĕле кунта хресчен сурчĕ тăваҫҫĕ, учреждениесемпе предприятисен сурчĕсем умне карта тытаҫҫĕ, урамсенче тротуарсем тăваҫҫĕ. Район центрĕнчи сад тавра вак чулсем сарса ҫул тăваҫҫĕ, ăна валли ҫителĕклĕ таран чул турттарса хатĕрленĕ.

Трикотаж. кĕпе-тумтир. атă-пушмак

РСФСР ҪĂМĂЛ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ХАЛĂХ КОМИССАРĔПЕ А. Ф. ЩОГОЛЕВПА КАЛАҪНИ

РСФСР-ти ҫăмăл промышленность куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине ӳстерет. Çак ĕҫ ĕнтĕ вăрçă пĕтсенех пуҫланчĕ. Халĕ трикотаж япалисем (ҫыхса тунă япаласем) йышлăн туса кăларас ĕҫ пуҫланчĕ. 1945 ҫул вĕҫĕ тĕлне 30 миллион мăшăр тĕрлĕ тĕслĕ чăлха туса кăлармалла. Чăлхасен чылай пысăк пайне пĕтĕрнĕ ҫипрен ҫыхаҫҫĕ. Дзержинский ячĕпе тăракан фабрика (Мускав облаҫĕ) хĕрарăм чăлхисен паха йышши сортне пĕтĕрнĕ пурҫăн ҫипрен ҫыхать. Кăҫалхи ҫул трикотаж фабрикисем ҫыхса тунă хĕрарăм кофтисем, джемперсем, ача-пăча костюмĕсем 3 миллион ҫурă хатĕрлемелле. Çавăн пекех аялтан тăхăнмалли 4 миллион мăшăр кĕпе-йĕм туса хатĕрлемелле.

Предприятисем хĕрарăмсемпе ача-пăча носкисем, спорт кĕпе-йĕмĕ—майкăсем, футболкăсем, трусиксем, шыва кĕмелли костюмсем тата ыттисем те нумай туса кăлармалла. Трикотаж промышленноҫĕн производствалла никĕсĕ аслăланса пырать: сывăхри 4—5 уйăх хушшинче ҫип авăрлакан фабрикăсенче ҫĕнĕрен 40 пин йĕке ĕҫлеме пуҫлаҫҫĕ.

Виҫҫĕмĕш кварталта тир-сăрап промышленноҫĕ атă-пушмак фабрикисемпе тата галантерея фабрикисем валли хром таварĕсем ытларах пама пуҫлать. Виҫĕ сăран завочĕ кăна—Ярославльри, Клинцы хулинчи тата Кузнецкри — граждансем валли хатĕрлекен хрома 4 миллион тăваткăл дециметра ҫити ӳстерсе кăларма тытăнаҫҫĕ. Клинцы хулинчи Юргенс ячĕпе тăракан тир-сăран завочĕсенче лак сăранĕ тăвас ĕҫ пуҫлапать. Çавăн пекех перчаткăсем тума каякан хăмăр тĕслĕ шеврет йышши сăран туса кăларасси те ӳсмелле. Çак ҫул хушшинче атă-пушмак фабрикисем чаплă йышши атă-пушмак кăна темиҫе ҫĕр пин мăшăр туса кăлармалла.

Сăранпа галантерея промышленноҫĕн главнăй инженерĕсен нумаях пулмасть пулса иртнĕ канашлăвĕнче хĕрарăм сумкисен, чемодансен, шкул ачисен сумкисен, портфельсен, спорт валли кирлĕ япаласен тĕслĕхĕсене ҫирĕплетнĕ. Фабрикăсене специализациленĕ. Хăшпĕр фабрикăсем хăйсем пуҫарса янипех сăрасем, прешкесем тата ытти япаласем тума пуҫланă.

Пирĕн ҫĕвĕҫсем ҫиелтен тăхăнмалли тумтирсен моделĕсене пăхса тухма смотр туса иртернĕ. Мускава 700 ытла илемлĕ те тума ҫăмăл модельсем илсе пынă. Вĕсенчен чи лайăххисене столицăри предприятисем туса хатĕрленĕ. Сăмахран, Мускаври Наркомлегпромăн модельсен сурчĕ, ҫавăн пекех Ленинградри, Горькири, Челябинскри тата ытти хуласенчи ҫĕвĕ фабрикăсем туса хатĕрленĕ. Йышăннă модельсене предприятисене ярса параҫҫĕ. Çĕвĕ фабрикисенче ҫиелтен тăхăнмалли тумтирсем хатĕрлемелли лабораторисем уҫаҫҫĕ. Сывăхри вăхăтрах модăсен журналĕн номерĕ тухмалла.

Хĕрарăмсемпе ачасем валли фетровăй, ҫăм велюр шлепкесем сутма пуҫлаҫҫĕ. Фетровăй ҫăматăсемпе тăрăп калушсем тума пуҫлаҫҫĕ. (ТАСС)

Докладчиксемпе агитаторсем валли

Халăха çутта кăларас ĕçри çитĕнӳсем

М. МАКАРОВ
Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ

Пирĕн чăваш халăхĕ çак иртнĕ 25 çул хушшинче халăха çутта кăларас ĕçре те, промышленноçпа ялхуçалăхĕнчи пекех, пысăк çитĕнӳсем турĕ. Шкул çулĕнчи ачасене пурне те пуçламĕш шкулта вĕрентессине пурнăça кĕртнĕ. Хуласемпе рабочи поселокĕсенче çичĕ çул вĕрентесси, тĕпрен илсен, пурнăçланса пырать. Çитĕннĕ çынсем хушшинче хут пĕлменлĕхе пĕтернĕ, халăх хуçалăхĕпе культурăн пур ĕçĕсем валли те нумай тĕрлĕ кадрсем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттернĕ. Халĕ ĕнтĕ наукăна вĕренсе алла илме кашни гражданинăн çул уçнă.

Патша саманинчен чăваш халăхĕшĕн питĕ чухăн культура юлнă. Халăх хушшинче революциччен хут пĕлекен çынсем 18 процентран ытла пулман, хĕрарăмсем хушшинче вара хут пĕлекенсем пĕтĕмпе те 4 процента яхăн çеç пулнă. Шкулта тăван чĕлхепе вĕренесси çинчен, хамăрăн нациллĕ литературăпа искусствăна аталантарасси çинчен шухăшлама та йывăр пулнă.

1913 çулта хальхи Чăваш республики йышăнса тăракан территори çинче пĕтĕмпе 463 шкул пулнă, вĕсенчен пуçламĕш шкулсем 426 шкул, икĕ класлă тата пысăкрах пуçламĕш шкулсемпе вăтам вĕренӳ заведенийĕсем—27. Çав шкулсенче пĕтĕмпе те 382 учитель кăна ĕçленĕ, 29.646 ача вĕреннĕ. Халăха çутта кăларас ĕç валли вăл вăхăтра патшалăх питĕ сахал укçа-тенкĕ панă, вăтамран çав укçа-тенкĕ кашни çын пуçне 66 пусран ытла мар тивнĕ. Сăмахран, Çĕрпӳ уесĕ пулнă вырăнта пурĕ 93 шкул пулнă, çав шкулсене тытса тăма 1901 çулта 20.000 тенкĕ расходланă. Кăçал, 1945 çулта вара, çав территори çинче 208 шкул ĕçлет, вĕсене тытса тăма государство 8 миллион тенкĕ ытла расходлать.

Совет влаçĕ кăна чăваш халăхне хăйĕн нациллĕ культурине тума, ĕçхалăхĕн хăватлă талантне ӳстерсе чечеклентерме тата пирĕн Тăван çĕршыври малта пыракан тăванла халăхсен виçине ӳссе çитме пур майсем те туса пачĕ.

Кивĕ стройран юлнă питех те сахал йышлă шкулсем чăваш халăхĕ культура патне пĕтĕм чун-чĕререн туртăннине çырлахтарма пултарайман. Чăваш автономине тунă малтанхи çулах унăн территорийĕ çинче пуçламĕш шкулсен йышĕ вăйлăн ӳснĕ. 1921 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕсен хисепĕ 585 шкула çитрĕ, çав шкулсенче вара шкул çулĕнчи ачасен 55.3 процентне çити вĕреннĕ.

Çамрăк совет çĕршывĕн хуçалăхĕ тĕреклĕнсе пынă май, правительство халăха çутта кăларас ĕç валли ытларах та ытларах укçа-тенкĕ пама тытăнчĕ, шкулсен йышĕ ӳсрĕ, вĕсенче вĕренекенсем нумайланчĕç.

Пурне те пуçламĕш шкулсенче вĕрентме тытăнас ĕç пуçланиччен пуçламĕш шкулсемпе вĕсенче вĕренекенсен тата учительсен йышĕ мĕнле ӳссе пынине çак тĕслĕхсем кăтартса параççĕ: 1923—24-мĕш вĕренӳ çулĕнче 611 пуçламĕш шкул пулнă, вĕсенче—41.526 ача вĕреннĕ, 1.003 учитель вĕрентнĕ; 1929—30-мĕш вĕренӳ çулĕнче — 1.010 пуçламĕш шкул пулнă, вĕсенче 76.214 ача вĕреннĕ, 1984 учитель вĕрентнĕ.

Партин XVI-мĕш съезчĕ шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те обязательнăй йĕркепе пуçламĕш шкулсенче вĕрентесси тата хут пĕлменлĕхе пĕтересси çинчен решени йышăнчĕ. Партин XVI-мĕш съезчĕ йышăннине тата аслă çулпуç Сталин юлташ кăтартса панине пурнăça кĕртес тесе, 1930—31-мĕш вĕренӳ çулĕнчен пуçласа пур çĕрте те, вăл шутра Чăваш республикинче те, пурне те обязательнăй йĕркепе пуçламĕш шкулсенче вĕрентме тытăннă. Çак ĕç çине пирĕн республикăри партипе совет организацийĕсем, халăха çутта кăларас ĕçĕн органĕсем, комсомолпа пĕтĕм общественность питĕ тимлĕн çавăрăнса пăхнă. 1930—31-мĕш вĕренӳ çулĕнче ял Совечĕсемпе колхозсем шкулсем валли 500 ытла тĕрлĕ çуртсем панă, çав çуртсене классем вырнаçтармалла тăвас, партăсемпе сĕтел пуканесем тупса хатĕрлес, шкулсене хутса ăшăтма вутă хатĕрлесе парас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ.

Шкулсемпе вĕсенче вĕренекенсен йышĕ хăвăрт ӳссе пынине çак тĕслĕхсем кăтартса параççĕ: 1930—31-мĕш вĕренӳ çулĕнче республикăри пуçламĕш шкулсенче 96.500 ача вĕреннĕ пулсан, 1940—41-мĕш вĕренӳ çулĕнче вара вĕренекенсен йышĕ 116.300 ачана çитнĕ. Çавăн пекех шкул тулашĕнчи учрежденисен хисепĕ те вăйлăн ӳссе пынă. Çĕнĕрен пионерсен çурчĕсене, ачасен техникăллă станцийĕсене спорт шкулĕсене, ачасен паркне тата ыттисене те уçнă.

Пурне те хут вĕрентес ĕç Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче те сӳрĕклентермерĕ. Вăрçă вăхăтĕнче республикăри шкулсен хисепĕ чакмарĕ, вăл кăштах ӳсрĕ те. Хальхи вăхăтра шкулсенче пурĕ 163.489 ача вĕренет.

Кунсăр пуçне фабрикăсемпе заводсенче ĕçлекен çамрăксен тата ялти çамрăксен каçхи шкулĕсем те уçăлнă.

Халăха çутта кăларас ĕç валли пирĕн республикăра 1944 çулта 83 миллион тенкĕ ытла панă, 1945 çулта вара çав хисеп 88 миллион тенкĕрен те иртнĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн общественность ачасене вĕрентес тата воспитани парас тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ. Çар çыннисемпе фронтовиксен ачисене пулăшма апат-çимĕç тата укçа-тенкĕ фончĕсем тунă. Пĕр Елчĕк районĕнче кăна 1944 çулта всеобуч фондне 384 мăшăр сăран тата çăм атăсем, 217 штука ăшă тумтирсем, 645 центнер ытла тĕштырă, 287 центнер çĕрулми, 44 центнер ытла пахча-çимĕç хывнă. Уйрăм колхозсемпе ял Совечĕсем тăлăха юлнă ачасем валли интернатсем (ача çурчĕсем) уçнă.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳлĕх паракан вăтам шкулсемпе педагогика училищисемсĕр пуçне, Чăваш республикинче вăтам тата аслă квалификациллĕ кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе 18 тĕрлĕ вĕренӳ заведенийĕсем пур. Вĕсен хушшинче—ялхуçалăх институчĕ, финанс, суту-илӳпе кооперации, энергетика тата ялхуçалăх техникумĕсем, музыкăпа художество шкулĕсем.

Вăрçă çулĕсенче промышленноçăн çĕнĕ отраслĕсем ӳссе аталаннине кура, çĕнĕ вĕренӳ заведенийĕсем — электромеханика тата пир-авăр техникумĕсем уçнă. Çав шкулсенче вĕренекенсен йышĕ кăçалхи çул 3.405 çынна çитрĕ.

Вĕренĕве анăçлăн йĕркелес ĕçре шкул çурчĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Ĕлĕкхи саманаран пире валли шкул çурчĕсем çав тери сахал юлнă. Чăваш автономине уçнă малтанхи çулсенче те шкул çурчĕсем çитменни питĕ сиввĕччĕн палăрнă. Нумай шкулсем тара илнĕ çуртсенче, шкул валли юрăхсăр çуртсенче вырнаçса тăнă.

Пурне те обязательнăй йĕркепе хут вĕрентмелли закона пурнăçлама тытăннă хыççăн республикăра шкул çурчĕсем тăвас ĕç анлăн саралса кайрĕ. 1931-мĕшпе 1940-мĕш çулсем хушшинче çулсерен 13 шкултан пуçласа 29 шкула çити çĕнĕрен туса ĕçе кĕртнĕ. Пĕтĕмпе вара çĕнĕрен 167 шкул çурчĕ туса лартнă, ку хисепе ĕççыннисем хăйсен пуçарăвĕпе, самообложени укçи-тенкипе тунă шкул çурчĕсем кĕмеççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче çĕнĕрен шкул çурчĕсем тăвас ĕç нумай чакрĕ, анчах чарăнса лармарĕ. Шкул çурчĕсене тĕпрен юсас ĕç е вак-тĕвек юсав ĕçĕсем туса ирттересси анлăн пулса пычĕ. Çапла, сăмахран, 1944—45-мĕш вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ май 904 шкул çуртне юсанă. Колхозсемпе колхозниксем çак ĕçе калама çук пысăк пулăшу пачĕç.

Тăван чĕлхепе учебниксем кăларас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем туса ирттернĕ, çак ĕç вăрçă вăхăтĕнче пĕрре те чакмарĕ. 1944 çулта 19 тĕрлĕ учебник 320 пинлĕ тиражпа кăларнă пулсан, 1945 çулта 31 тĕрлĕ учебник 479 пинлĕ тиражпа кăларма палăртнă.

Халăха пĕлӳлĕхпе культурăна хисеплеме вĕрентсе пырса, Совет влаçĕ малтанхи çулсенчен пуçласах халăх учителĕшĕн ялан тимлĕн тăрăшнă. Патша вăхăтĕнче хальхи Чăваш республики вырнаçса тăракан территори çинче учительсен икĕ семинарийĕ, учительсене вĕрентмелли курс пулнă. Вĕсем учительсен кадрĕсене кирлĕ таран вĕрентсе кăларма пултарайман. Халĕ учительсем вĕрентсе хатĕрлес ĕç питĕ паха задача пулса тăчĕ. 1921 çултах Чăваш республикинче 5 педтехникум ĕçлеме тытăннă, вĕсемсĕр пуçне учительсем вĕрентсе хатĕрлеме кĕске вăхăтлăх курссем организациленĕ. Вĕсенчен вĕренсе тухнă учительсем пире всеобуч законне пурнăçа кĕртес ĕçе анăçлăн тытăнма пулăшрĕç.

1930-мĕшпе 1945-мĕш çулсем хушшинче республикăри 6 педучилищĕрен 6000 учитель вĕренсе тухрĕ. 1930 çулта Чăваш республикинче малтанхи аслă шкула—Чăвашсен педагогика институтне уçнă, тепĕр тăватă çул иртсен, ун çумĕнче учительсен институчĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Çав институтсем 14 çул хушшинче çичĕ çул вĕренмелли шкулсемпе вăтам шкулсем валли тĕрлĕ специальноçсемпе ĕçлекен 1823 учителе вĕрентсе кăларчĕç.

Педагогика ĕçĕн чăн-чăн мастерĕсем республикăра çулран-çул ӳссе пыраççĕ. Пĕтĕмпе 98 учителе правительство пысăк наградăсем панă. Вĕсенчен 68 çын Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче ачасене вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе вăя хĕрхенмесĕр ĕçленĕшĕн Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илме тивĕçлĕ пулчĕç. Сĕнтĕр вăтам шкулĕн пуçламĕш классенче вĕрентекен учитель М. И. Багров, Куславкка районĕнчи Пăрмас пуçламĕш шкулĕн учителĕ А. Т. Некрасов, халĕ Çĕрпӳри ача çурчĕн директорĕ пулса ĕçлекен П. А. Григорьева учительница тата ыттисем те Ленин орденĕсем илчĕç.

Совет шкулĕсемпе халăх учителĕсем пирĕн ачасенчен Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн юратакан патриотсене вĕрентсе çитĕнтереççĕ. Совет халăхĕ фашистла Германие аркатса тăкса тунă историллĕ çĕнтерӳре совет учителĕсен тава тивĕçлĕ ĕçĕ те палăрса тăрать. Пирĕн чаплă земляксем—Совет Союзĕн Геройĕсем Александр Тухланов, Иван Поляков, Александр Сидорин, Михаил Сапожников юлташсем Хĕрлĕ Çара шкултан вĕренсе тухсанах кайнă, Совет Союзĕн Геройĕсем — Б. Васильев, И. Яшин, Т. Индряков юлташсем вăрçăччен ялти учительсем пулса ĕçленĕ.

Халăх учительне тăтăшах ӳссе пыма тата хăйĕн педагогикăллă мастерлăхне ывăнма пĕлмесĕр лайăхлатса пыма совет влаçĕ пысăк майсем туса панă. Республикăра учительсен ăсталăхне ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен институт, чĕлхепе литературăн тата истори наукăпа тĕпчев институчĕ, кашни районрах—педагогика кабинечĕ пур. Педагогика институчĕсемпе педучилищĕсем çумĕнче заочнăй йĕркепе вĕренмелли отделенисем уçнă, вĕсенче пурĕ 20.804 çын вĕренет.

Совет шкулĕ Отечественнăй вăрçă çулĕсенче вăрçă тĕрĕслевне чысăн тӳссе ирттерчĕ. Вăл малаллах çирĕпленсе пычĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче партипе правительство шкула çирĕплетес тĕлĕшпе чылай паха решенисем йышăнчĕç. Арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăммăн вĕрентмелле тунă, вĕренекенсем валли правилăсем йышăннă, вĕренӳ ĕçĕнче ăмăртăва пĕтермелле тунă, ачасен пĕлĕвне тата вĕсем хăйсене мĕнле тыткаланине хаклама пилĕк паллăллă цифрăллă системăна пурнăça кĕртнĕ, ачасене çар ĕçне вĕрентмелле тунă, ачасене çичĕ çултан пуçласа шкула явăçтармалла тунă тата шкулсене инспекторсем енчен пăхса тăрассине йĕркене кĕртнĕ.

СССР Совнаркомĕ 1944 çулта йышăннă постановлени тăрăх, 1945 çултан пуçласа 4-мĕшпе 7-мĕш классенчен вĕренсе тухакансене экзамен тыттармалла, 10-мĕш классенчен вĕренсе тухакансене вара çитĕнсе çитнине кăтартакан аттестат илмелли экзаменсем тыттармалла тунă. Халĕ шкулсенче пулса пыракан экзаменсем учительсемпе вĕренекенсем хăйсен парлатарлă ĕçне, Тăван çĕршыв умĕнчи ответлăха туйса тăрса, туса пынине кăтартса параççĕ.

Çакăнпа пĕрлех Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче шкулсем вĕренекенсене обществăшăн усăллă ĕçе фронта пулăшнă çĕре организациленĕ центрсем пулса тăчĕç.

Вăрçă çитĕннĕ çынсене кăна мар, ачасене те пысăк асапсем кӳчĕ. Пиншер ачасем тăлăха тăрса юлчĕç. Тăван çĕршыв ачасем çинчен манмарĕ, вĕсене тăрантарса, тумлантарса, усрамалла, сăвăнса пурăнмалла турĕ. Вăрçă вăхăтĕнче кăна ачасем валли 9 çурт уçнă. Пĕтĕмпе пирĕн республикăра 16 ача çурчĕ ĕçлет, вĕсенче 2.107 ача вырнаçса пурăнать. Кунсăр пуçне колхозниксем хăйсен вăйĕпе 21 ача çурчĕ уçнă.

Çак иртнĕ 25 çул хушшинче шкул çулне çитмен ачасене вĕрентсе, воспитани парса пырас тĕлĕшпе те пысăк çитĕнӳсем тунă. Революциччен Чăваш çĕршывĕнче шкул çулне çитиччен ачасем валли нимĕнле учреждени те пулман. Халĕ пирĕн республикăра пурĕ 76 ача сачĕ ĕçлет, вĕсенче 4190 ача вырнаçса тăрать. Ача сачĕсемпе яслисем ачаллă хĕрарăмсене предприятисемпе учрежденисенче, колхозра канăçлă ĕçлеме май параççĕ, пĕчĕк ачасене коммунистла воспитани парса çитĕнтереççĕ.

Шкулсемпе пĕрлех республикăра политпросвет учрежденийĕсем те вăйлăн ӳссе пычĕç. Халĕ республикăра 621 вулав çурчĕ, 104 библиотека, 204 колхоз клубĕ, 28 культура çурчĕ, 83 киноустановка, 4 театр тата ытти тĕрлĕ учрежденисем ĕçлеççĕ.

Культура фронтĕнче тунă çитĕнӳсемпе чăваш халăхĕ тивĕçлипех мухтанма пултарать. Анчах эпир çитĕнӳсемпе лăпланса ларма вĕренмен. Халĕ мирлĕ аталану тапхăрĕ пуçланчĕ. Халăха çутта кăларас ĕçри çитĕнӳсене малалла ӳстерсе пымалла, хамăрăн нациллĕ совет культурине татах та вăйлăнрах чечеклентермелле.

Прага совет полководецĕсене чыслать

СОВЕТ МАРШАЛĔСЕНЕ, ГЕНЕРАЛĔСЕНЕ ТАТА ОФИЦЕРĔСЕНЕ ЧЕХОСЛОВАКИ РЕСПУБЛИКИН ОРДЕНĔСЕМПЕ НАГРАДĂЛАНИ

ПРАГА, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Июнĕн 6-мĕшĕнче Чехословаки республикин столици Чехословакипе унăн столицине Прагăна ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче Хĕрлĕ Çарăн чапа тухнă Маршалĕсене, генералĕсене тата офицерĕсене чысланă. Каçхине 5 сехетре Прага замокне Совет Союзĕн Маршалĕ Конев, бронетанковăй çарсен Маршалĕ Рыбалко, арми генералĕ Еременко, СССР посолĕ Зорин, Чехословакин наци оборонин министрĕ Свобода генерал, Гордов генерал-полковник тата ыттисем те пынă. Вĕсене совет çарĕсен тата Чехословакин хисеплĕ хуралĕсем рапорт панă. Дворец площадĕнче стройра тăнă çарсене ырă суннă хыççăн çар пуçлăхĕсем замока кайнă. Унта вĕсене премьер-министр Фирлингер, Чехословаки çарĕн главнăй штабĕн начальникĕ Бочек генерал тата Чехословаки правительствин ытти членĕсем те хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

Президент кабинетĕнче совет Маршалĕсемпе генералĕсене Чехословаки республикин орденĕсене панă. Республика президенчĕ совет полководецĕсене тата СССР посолне Зорина вырăсла каласа саламланă. Президент Совет Союзĕпе унăн Хĕрлĕ Çарне Чехословакие ирĕке кăларма çав тери вăйлă пулăшнăшăн чĕререн тав тунă.

Унтан президент Коневпа Рыбалко Маршалсене тата арми генералне Еременкăна Чехословаки республикин чи аслă орденне—Чехословакин Шурă Арăслан ятлă хĕçлĕ орденăн Аслă Хĕресне, Шурă Арăслан ятлă вăрçă орденĕн Ылттăн çăлтăрне, çавăн пекех тата Чехословакин 1939-мĕш çулхи вăрçă хĕресне панă. Малиновский Маршала наградăлланă орденa, вăл Прагăна каярахпа çеç çитнĕ пирки, Конев Маршал илнĕ.

Бенеш президент Чехословаки республикин орденĕсене Хĕрлĕ Çарăн тата 37 генералĕпе офицерне панă.

Прага замокĕнчен Коневпа Рыбалко Маршалсем, арми генералĕ Еременко, СССР посолĕ Зорин, Совет тата Чехословаки генералĕсем Староместски площаде кайнă. Унта вĕсене Прага хулинчи халăх темиçе пин çын кĕтсе тăнă. Вара унта питĕ пысăк митинг пулса иртнĕ. Çав митинг Конева, Малиновские тата Еременкăна Прага, Братислава Брно тата Моравска Острава хулисен хисеплĕ гражданĕсем пулма суйланă ятпа пулса иртнĕ.

Митингра премьер-министр Зденек Фирлингер сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Чехословаки республикипе унăн столицине Прагăна ирĕке кăларнă паттăр çарсене ертсе пынă вырăс полководецĕсене чунтан-чĕререн тав тунă.

Фирлингер каланă чухне митингри халăх темиçе хут та, çав тери шавлăн алă çупса, «Сывă пултăр чаплă Хĕрлĕ Çар» тесе хавасланса кăшкăрнă.

Совет Союзĕн Маршалĕ Конев вĕсене ответлесе сăмах каланă.

Митинг хыççăн республика президенчĕ хăйĕн дворецĕнче совет полководецĕсене чысласа йышăну туса ирттернĕ.

ФРАНЦИЕ ТАПĂНСА КĔНĔРЕНПЕ СОЮЗНИКСЕМ ТУНĂ ÇУХАТУСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксем Францие тапăнса кĕнĕ кунран пуçласа (1944 çулхи июнĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа) Сĕнтерӳ кунне çитиччен, вилнисене, аманнисене тата пĕр хыпарсăр çухалнисене шута илсен, Англипе Канадăн 184.512 çын пĕтнĕ.

Тапăнса кĕнĕ кунран пуçласа 337 кун хушшинче Пĕрлешӳллĕ Штатсен 514.584 çын пĕтнĕ.

Французсен 61.247 çын пĕтнĕ.

Поляксен 5.593 çын пĕтнĕ.

Чехословакин 590 çын, Бельгин 364 çын, Голландин — 177 çын пĕтнĕ.

Ку шута союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ертсе пыракан 6-мĕш, 12-мĕш тата 21-мĕш армисен группировкисен зонинчи çĕр çинчи çарсем кăна кĕреççĕ. Ку списока сывлăш-çар флочĕн çухатăвĕсем кĕмен.

СУДЗУКИ ЯПОНИ ПАРЛАМЕНТĔНЧЕ КАЛАНИ

ТОКИО, июнĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Домей Цусин» агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Япони премьер-министрĕ Судзуки парламент сессийĕнче сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: Япони пĕр сăмахсăрах парăнма ыйтнине йышăнмасть, тенĕ.

Вăрçăн хальхи йывăр кунĕсем çинчен каланă май Судзуки çакна палăртса панă: тăшман пырса кĕнипе вăрçă Японин хăйĕн тĕп территорийĕнче пуçланса кайсан, Япони хăйĕн территорийĕ географи тĕлĕшпе лайăх вырăн йышăнса тăнипе туллин усă курĕ, тенĕ.

Тăшман авиацийĕ Японин хăйĕн тĕп территорине тапăнни çинчен каланă май Судзуки çакна асăрхаттарнă: тăшман авиацийĕ тапăнасси вăйланнăçемĕн вăйлансах пырать пулмалла, тенĕ. Япони районĕсене нумайĕшне авиаци самаях пысăк сиен кӳнĕ тата сывлăшри тапăнусем пирки сахал мар çын вилсе е аманса пĕтрĕ, тесе хурланса каланă. Малалла Судзуки çапла каланă: промышленноçăн паха предприятийĕсене тĕрлĕ районсене куçарса лартатпăр, сиен курнисене çĕнĕрен ура çине тăрататпăр, тенĕ. Унтан Судзуки Япони правительстви çакăн çине шанса тăнине палăртнă: бомбăсем пăрахнине пула сиен курнă районсенчи халăх хăйĕн пурнăçне вăрçă ыйтнă пек юсаса яма мĕнпур вăя хурса тăрăшĕ, тенĕ.

Юлашкинчен Судзуки çапла каланă: Япони «мĕн вĕçне çитичченех» çапăçма хатĕр, тенĕ.

КĔСКЕН

▲ Франци сучĕ Гитлер оккупанчĕсемпе пĕрле ĕçлесе тăнăшăн Жан Растеллие вĕлермелле тунă. Жан Растелли Вишири политика полицийĕн департаменчĕн пуçлăхĕн помощникĕ пулса ĕçленĕ.

▲ Италири фашистла правительствăн членĕ тата «Коррьера делла Сера» хаçатăн редакторĕ пулнă Эрмано Амикучие суд вĕлермелле тунă.

▲ Малака проливĕнче Пенанга çывăхĕнче Англин çар карапĕсем Японин «Нати» йышши крейсерне, 10.000 тонна таяканскере, путарнă. Англи флочĕн пĕр эсминецĕ пĕтнĕ.

▲ Норвегире Осло-фиордри утравсенчен пĕринче нимĕçсем тунă тепĕр «вилĕм лагерьне» тупнă. Çав лагере тыткăна лекнĕ совет çыннисене хупма тунă. Унта питĕ нумай çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Чĕрĕ юлнă темиçе çĕр çынтан 50-шĕ ытла вилес патнех çитнĕ.

▲ Флоренцире Пьетро Коха—нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем патĕнче ĕçре тăрса, Рима оккупациленĕ вăхăтра патриотсене тискеррĕн асаплантара-асаплантара вĕлернĕ чи хаяр палачсенчен пĕрне — тытса хупнă. (ТАСС).

Аркадий Эсхель

Республика çулĕ

Аслă Сталина халаласа çырнă поэма

Хĕвелпеле мăн Атăл хумĕ
Ялтрарĕ ылттăн пек таса.
Çуралчĕ пирĕн Автономи
Пире çĕнĕ вăй-хал парса.
Юрларĕ авалхи юманлăх,
Илемлĕн çуралчĕç садсем.
Çĕнĕ ĕçе çĕкленчĕ халăх,
Çав ырă хыпара илтсен.
Октябрьпе çуралнă сăвăç
Çеçпĕл Мишши—кăвар чĕре
Каланă: «Чăвашсем те тăрĕç
Пĕр хисепре, пĕр тивĕçре».
Авал выç кашкăрсем уланă
Хĕвелсĕр сĕм вăрмансенче,
Ӳçен арăмути кăшланă,
Суха витмен уйхирсенче
Ӳсе хăпарчĕç, капăрланчĕç
Кĕрнек завод корпусĕсем,
Çĕртен тенĕ пекех çуралчĕç
Хĕвеллĕ çĕнĕ хуласем.
Республика, мĕнле вăл ӳсрĕ
Хĕрӳ пилĕкçуллăхсенче.
Хăватлă, сулăмлă индустри
Çуралчĕ пирĕн çĕр çинче.
Чăпта станне кăна курман-и
Унччен пирĕн чăваш çынни?
Вăранчĕ Çĕмĕрле вăрманĕ,
Вăранчĕ Куславкка сырми.
Канаш вагонĕсем сӳреççĕ
Мĕнпур Союз çулĕсемпе.
Тырпул леççе, станок кӳреççĕ,
Республика чапне çĕклеççĕ
Хăйсен васкавлă чуппипе.
Ĕлĕк чăвашăн хура пӳрчĕ
Хăйкăчă çеç пĕлнĕ пулсан,
Ильич лампăчкине вăл курчĕ,
Çуталчĕ хĕвелпе тулса.
Ĕçчен ятне те пирĕн халăх
Алла авмасăр туянман.
Хастарлăн ӳсрĕ алăсталăх,
Вылять аллăмăрта вăрман.
Тĕп авалхи чăваш юманĕ
Ĕлĕкренпех чапра тăрать.
Ун чапĕ халь тата вăйланнă,
Пур çĕршыва вăл саламать.
Сăпайлă, ирĕк чăваш хĕрĕ
Илемлĕ тĕрĕсем тĕрлет.
Вăл чĕнтĕрленĕ çутă тĕрĕ
Çĕршыв илемĕпе çиçет.
Аваллăх тĕшмĕшлĕхĕ иртрĕ,
Эпир çĕнниншĕнех хавас.
Халь хамăрăн çитĕнсе çитрĕ
Ĕçчен, хастар рабочи класс.
Çăпата калăпĕ, пир станĕ,—
Çакна çеç пĕлнĕ яш-хĕрсем
Техникăпа хĕçпăшалланнă,
Вĕсем халь—чаплă маçтăрсем.
Пире аслă плансен хăвачĕ
Çав ĕçсене тума май пачĕ.
Сана, тăванăмăр çулпуç,
Чунтан калатпăр: тавтапуç!

* * *

Халь уйхирсем те пирĕн урăх,
Ял сăпĕ улшăнчĕ йăлтах.
Йăлт урăх сывлăш, урăх юрă
Хавассăн илтĕнет ялта.
Хирте мĕн чухлĕ тар тăкман-ши
Пĕччен хуçалăхпа эпир?
Çапах та саплăклă сăкман пек
Выртатчĕ ун чухне уйхир.
Çав «сăкмана» та турткаланă:
Çĕр тухйи, тенĕ, ытларах.
Часах-çке юн та тăкаланă
Çĕрсем валеçнĕ чух вара.
Анчах кулак çăпан пек ларнă
Çемçе те лайăх çĕр çинче.
Пайтах тертленнĕ, асапланнă
Эпир хресчен ĕмĕрĕнче.
Ăçта унта хулашăн çăкăр,—
Çитмен вăл хамăра валли.
Хире ак халĕ тухса пăхăр:
Мĕскер тăвать хресчен алли!
Пин саплăк мар. Хирсем пĕр тинĕс
Выртаççĕ халĕ колхозсен;
Савăнтарать çав аслă тинĕс,
Чуна-çĕклеççĕ хумĕсем.
Çав тинĕс урлă хир карапĕ—
Комбайн мăнаçлăн ярăнать.
Ку — сталинла индустри чапĕ,
Ку—пирĕн çĕнĕ самана.
Карапăн штурвалне сăпайлăн
Чăваш хĕрĕ тытса пырать.
Тырă çеç мар вырать комбайн,
Малашлăха вăл çул хывать.
Авал асаплă сухапуçĕ
Çĕре амантнă вырăнта
Паян ĕçлеççĕ чаплă хурçă
Утсем, пĕлмеççĕ ывăнма.
Ĕлĕк тăпачăпа çурла çеç
Пĕлнĕ пулсассăн чăвашсем,
Халь пирĕн çĕр çинче юрлаççĕ
Пур евĕрлĕ машинăсем.
Чаплă çынсем çитĕнсе çитрĕç
Колхозсенче ку вăхăтра.
Нумайĕшсем ав орден илчĕç.
Хăшсем татах та хӳхĕм ӳсрĕç,
Ĕçлеç Верховнăй Советра.
Колхозăн иксĕлми хăвачĕ
Пире хавасла пурнăç пачĕ.
Çав пурнăçшăн, çулпуç, сана
Колхозник ăшшăн саламлать.

* * *

Авал эпир çапла юптарнă:
Пирĕн чăваш кĕнекине
Ним хăвармасăр çисе янă
Пыран та хапсăнчăк ĕне*.
Мĕнле ĕне пулни вăл паллă,
Вăл курăнать юптаруран:
Патша каланă: тĕттĕм халăх—
Маншăн чи шанчăклă чура.
Çапах та пирĕн ĕмĕт çуннă,
Вăл туртăннă çутă патнех.
Халăх ĕненнĕ, халăх туйнă
Хăйĕн ăсхакăл хăватне.
Çакна сиссе, чун пек тăванăн.
Пирĕн патра шкулсем тума
Илья Николаевич Ульянов**
Вăй хунă, тăрăшнă нумай.
Çав йывăр вăхăтра çуралчĕ
Мухтавлă Иванов таланчĕ.
Каларĕ вăл: «Çут тĕнчере
Вăйлийĕ çук та этемрен.»
Анчах культурăн аслă çулĕ
Пуçланчĕ çут Октябрьтен.
Вăл пачĕ халăха хăюлăх:
Ĕçле, çĕнтер те хĕпĕрте!
Халăх таланчĕпе вăй-халĕ
Хăтăлса тухрĕ тĕтререн.
Тӳр çул кăтартрĕ Ленин—Сталин
Наци политики пире.
Ана хăй чĕлхипе вуларĕ
Чăваш çынни; мĕн ачаран—
Хисеплĕ асанне таран,
Алла тытса чăваш букварĕ,
Пур халăх вĕренме пуçларĕ.
Аслă шкулта та вĕренетпĕр
Ытти халăхсемпе пĕр тан.
Ĕлĕк тесессĕн, тĕлĕкре те
Вăл пирĕн чăвашсен пулман
Культура чаплă чечекленчĕ,
Ун вăйĕ ӳснĕçем ӳсет.
Халь хамăрăн интеллигенци
Халăх телейĕшĕн ĕçлет.
Кĕнекесем пиншер тухаççĕ,
Нумай тухаççĕ хаçатсем.
Тăван чĕлхепеле вулаççĕ
Пурне те халĕ чăвашсем.
Чăваш ĕççынĕ Ленинпа та
Халь сăмахлать ав чăвашла.
Тăван çулпуçăмăр, санпа та
Хăй чĕлхипе вăл канашлать.
Чечекленет тăван чĕлхемĕр
Пухать вăл хăйĕн хăватне,
Ун çĕнĕ ĕмĕрти хĕлхемĕ
Пырать кашнин чĕри патне.
Ӳсет тăван литература,
Ӳсеççĕ пирĕн ĕмĕтсем.
Çĕршыв çинчен мухтавлă юрă
Хываççĕ пирĕн поэтсем.
Ĕлĕк-авал чăваш хăранă
Хăй юррине çын илтесрен.
Юман хăвăлĕнче усранă
Вăл çав юрра мĕн ĕмĕртен*.
Октябрьпе çеç пирĕн юрă
Тин тухрĕ çут тĕнче умне,
Янраса кайрĕ уйхир урлă,
Мускав та илтрĕ сассине.
Чăваш театрĕ те çуралчĕ
Граждăн вăрçи вут-хĕмĕнче.
Вăл аслăланчĕ, хăватланчĕ
Ирĕк совет саманинче.
Пулман ĕлĕк художник ячĕ,—
Халь çитĕнчĕç художниксем,
Музăкçăсем, юрăçăсем,—
Пурте вĕсем халăх таланчĕн
Хĕвелпе ӳснĕ калчисем.
Çулпуçăмăр, эсех хăтартăн
Тискер трахомăран пире.
Пире эс куç çутийĕ патăн
Курмашкăн аслă ĕмĕре.
Пирĕн хастар та сывă халăх
Куллен хавассăн та пĕрле
Тăванлă халăхсемпеле
Ĕçлерĕ пур çĕрте те лайăх,
Пĕрмай вăл утрĕ çӳлелле.
Тăван çĕршыв вара тивлетлĕн
Курса хакларĕ çав ĕçе.
Республика çинче хĕлхемлĕн
Ав Ленин орденĕ çиçет.
Çапла çĕршыв туса çитерчĕ
Телейпе савăнăç çуртне.
Çĕнĕ хĕвел çӳле çĕкленчĕ,
Çутатрĕ чаплă çурт ăшне.
Вăл пулчĕ—çĕнĕ Конституци,
Вăл ялкăшса çутатнăçем
Мăнаçлăн, чаплăн тухса тăчĕç
Иртнĕ кунхи çĕнтерӳсем.
Çĕнĕ Законăмăр хăвачĕ
Çĕн самана пуçласа пачĕ.
Çулпуçăмăр, мухтав сана!
Мухтав çав аслă Закона!

(Малалли пулать).

* Ваттисен ĕлĕкхи сăмахĕ.
** И. Н. Ульянов—В. И. Ленин ашшĕ, халăх шкулĕсен инспекторĕ.
*) Чăваш халапĕнчен.

Малалли. Пуçламăшĕ 111-мĕш номерте.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—39, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, издательство контори секретарĕн 0—23.

НТ 00133 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000